27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
ДЕКАБРЬ
27
ЮНКУН
253(6748) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТАШУПАШКАР ХУЛАСОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Хĕрлĕ Çар фондне тырă хушса парас ĕçе анлăн сарса ярар!

Паян «Чăваш Коммуни» хаçатра, Çĕрпӳ районĕпе Шупашкар районĕнчи колхозсем пуçарнипе, республикăри колхозсенче пысăк патриотизмлă юхăм пуçланса кайни çинчен калакан материалсем пичетленеççĕ.

— Государствăна тырă тăшмана çĕнтермешкĕн тата нимĕç захватчикĕсем аркатса хăварнă халăх хуçалăхне юсаса часрах ура çине тăратмашкăн кирлĕ,—терĕ районри канашлура Çĕрпӳ районĕнчи «Красный герой» колхоз председателĕ, Отечественнăй вăрçă инваличĕ Данилов юлташ. — Эпир государствăна тырă тăшмана çĕтерме кирлĕ чухлĕ пама пултаратпăр тата памалла та.

Данилов юлташ Хĕрлĕ Çар фондне хăйĕн запасĕнчен 20 пăт тырă хывма сăмах панă. Унăн çак ĕçне канашлура нумай колхозсен председателĕсем ырланă. Данилов юлташăн сĕнĕвне тивĕçлипе сӳтсе явса, канашлу государствăна Хĕрлĕ Çар фончĕ валли районĕпе 5.000 пăтран кая мар тырă пама кăмăл тунă, çав шутран 4.000 пăтне колхозникĕсемпе колхозницăсем хăйсен запасĕсенчен памалла.

Ĕнер Шупашкар районĕнчи Толик Хураçки ялсоветĕнчи «Малалла» колхозра Сталин юлташăн докладне сӳтсе явнă. Çав колхозăн колхозникĕсем, çулпуç доклачĕ çине ответлесе, Хĕрлĕ Çар фондне хывма государствăна колхозниксен тырринчен 150 пăт тата артель фондĕнчен 60 пăт тырă хушса пама йышăннă. Çак питĕ паха та патриотла ĕçре колхозри активистсем лайăх пример кăтартса панă. Çапла, колхоз председателĕ Григорьева юлташ 15 пăт пама, фермăсен заведующийĕ, бригадирсем тата ытти активистсем 5—10-шар пăт тырă пама пулнă. Пуху районри мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене хăйсем пек тума — колхозниксен тата колхозсен запасĕсенчен çĕнтерӳ фондне тырă пама пуçлама чĕннĕ.

— Фронта тырă ытларах парса, тăшмана пĕтĕмпех çĕнтерес сехете çывхартар, — тесе çыраççĕ Шупашкар районĕнчи «Малалла» колхозăн колхозникĕсем.

Чăнах та ĕнтĕ, çĕршыва фронта тырă питĕ кирлĕ тата сахал мар кирлĕ! Орденлă Чăваш республикинчи колхозниксем çакна лайăх ăнланаççĕ. Совет халăхĕ фашистла Германие хирĕç вăçĕ çул çурă хушши историре пулман пек паттăррăн çапăçать. Парти, правительство тата аслă Сталин ертсе пыракан колхозлă хресченсем Отечественнăй аслă вăрçăн йывăрлăхĕсене хастарлăн тӳссе ирттерчĕç. Пирĕн халăх тăшманa хирĕç калама çук вăйлăн кĕрешнине пула, фронтпа тыл паттăррăн ĕçленине пула, пирĕн таса çĕршыва фашистла нимĕç ирсĕрĕсенчен тасатса çитерне. Халĕ Хĕрлĕ Çар гитлерла Германие юлашки хут татăклăн пырса çапма хатĕрленет. Çак çапăçу вăл çăмăл пулмасть, тылăн паттăр фронта тата ытларах пулăшмалла пулĕ.

Тăшмана çĕнтерес ĕçре тырă питĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать. Тырăсăр тăшмана çĕнтерме çук. Тырăшăн кĕрешни — эпир çĕнтерессишĕн кĕрешни пулать. Хамăр Тăван çĕршыва сыхлакан нумай миллионлă çара тăрантарса пурăнма тырă нумай кирлĕ, промышленноçпа транспортра фронт валли хăйсен вăйне шеллемесĕр ĕçлесе тăракан çынсене тăрантарма та тырă сахал мар кирлĕ. Вăрçăн ăывăр кунĕсенче государство хăйĕн запасĕнчен калама çук нумай тырă расходланă. Çакна тата Тăван çĕршыв умĕнчи тивĕçе пĕлсе тăрса, пирĕн республикăри кашни колхозник республикăра пуçланса кайнă патриотла юхăма хутшăнмалла—Хĕрлĕ Çар фондне тырă памалла.

Кăçал пирĕн республикăри колхозсем Хĕрлĕ Çар фондне 500 пин пăт тырă хушса пачĕç. Анчах ун чухне çав ĕçе колхозниксем çителĕклĕ хутшăнма пултарайман, мĕншĕн тесен ун чухне ĕçкунĕ пуçне мĕн чухлĕ тырă лекесси паллă пулман. Халĕ нумай колхозсенче ялхуçалăх çулĕн итогĕсем паллă пулса тăнă. Çав итогсем пирĕн, калас пулать, начар мар. Çĕрпӳ районĕпе Шупашкар районĕнчи колхозниксен пуçарăвĕ вăл çак енчен паха: вăл колхозниксемпе колхозницăсене государствăна, пуринчен ытла хăйсен запасĕсенчен тырă парса пулăшма сĕнет.

Партипе совет работникĕсен çакна лайăх пĕлмелле: çак ĕçре те ĕç хăй тĕллĕн пулса пырассине шанма юрамасть. ВКП(б) райкомĕсен, ялсенчи партипе комсомол организацийĕсен çапла тумалла: çак питĕ паха ĕçре коммунистсем, комсомолецсем тата колхоз активисчĕсем хăйсем пример кăтартса пычăр, çак ĕçе активлăн хутшăнччăр, ăна ертсе пычăр.

Кунсăр пуçне, çак кунсенче тата кая юлакан колхозсем çине тимлĕн çавăрăнса пăхмалла. Пирĕн государствăна обязательнăй йĕркепе памалли тырра парса татман колхозсем те пур-ха. Çавăн пек колхозсен руководителĕсем государствăна тырă парса татманнине тырă начар пулнипе, колхоз кая юлнипе тата ытти сăлтавсемпе ăнлантарса пама тăрăшаççĕ. Анчах вĕсем часчасах государствăна хирĕçле ĕç тăваççĕ— государствăна парса татиччен тырра салатса яраççĕ. Çавăн пек руководительсене пуçран шăлма юрамасть. Тырă хатĕрлемелли план—закон пулса тăрать, ăна пур колхозсен те пурнăçа кĕртмелле. Колхоз пурнăçĕнчи çав çирĕп закона пĕр колхоз та пăсма пултараймасть.

Вырăнти партипе совет органĕсен, Уполнаркомзаг работникĕсен шăйкка тырри пухмалли государство заданине пурнăçа кĕртесси çине те тимлĕн çавăрăнса пăхмалла. Хăшпĕр тĕлте армансенче пухăнакан тырă ăçта кайнине тĕрĕслеме пăрахнă. Республикипе илсен, шăйкка тырри вăл сахал мар пухăнать. Арман пур колхозсен шăйкка тырри пухма панă задание пĕр пăрканмасăр пурнăçа кĕртмелле. Малта пыракан колхозсем ку тĕлĕшпе тĕрĕс тăваççĕ: вĕсем халь шăйкка тыррине государствăна пĕтĕмпех парса татаççĕ те кайран вара армансра пухăнакан шăйкка тыррине пухăннăçемĕн колхоз амбарне таварса параççĕ.

Чăваш республикинчи колхозниксемпе колхозницăсем социализмлă государство умĕнчи обязательствăсене яланах чыслăн, вăхăтра тата пĕтĕмпех пурнăçласа пынă. Колхозлă ялăн ĕççыннисем халĕ Хĕрлĕ Çар фондне тырă парас ĕçе сарса пыраççĕ. Çак пысăк та питĕ кирлĕ ĕçе те пирĕн республикăра кăтартуллăн туса ирттересси пирки иккĕленмелли çук.

Фронта пулăшассине тата ытларах вăйлатар!

Колхоз фончĕпе колхозниксен харпăрхăй запасĕнчен Хĕрлĕ Çар фондне тырă парар!

Çĕрпӳ районĕнчи колхозниксен патриотла пуçарăвĕ

ÇĔРПӲ, декабрĕн 26-мĕшĕ. (ТЕЛЕФОНПА). Кунта колхозсемпе ялсоветсен председателĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлура районри партипе совет активĕ те пулчĕ. Сталин юлташ Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 27 çул тултарни çинчен тунă докладпа приказа пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе тăракан черетлĕ задачăсем çинчен канашлура парти райкомĕн секретарĕ Д. Митьков юлташ доклад туса пачĕ. Докладчик Отечественнăй вăрçăн хальхи татăклă тапхăрĕнче фронта пулăшассине малалла вăйлатса пыма кирли çинчен каларĕ. Пур колхозсенче те çуракине хатĕрленес ĕçе анлăн сарса ямалла, чугун çул валли вутă хатĕрлесе турттарас тĕлĕшпе панă заданисене тĕрĕс пурнăçласа пымалла,—терĕ докладчик.

Доклад хыççăн «Красный герой» колхоз председателĕ, Отечественнăй вăрçă инвалидĕ Данилов юлташ сăмах илчĕ. Вăл çапла каларĕ:

— Пирĕн колхоз государство умĕнчи хăйĕн обязательствисене тӳрĕ кăмăлпа пурнăçа кĕртрĕ. Эпир халĕ килес çулхи çуракине хĕрӳллĕн хатĕрленетпĕр. Тӳрĕ кăмăлпа тăрăшса ĕçленĕшĕн пирĕн колхозниксем ĕçкунĕ пуçне икшер килограмм ытла тĕштырă илеççĕ. Чылай колхозниксем кăçал çĕршер пăт ытла тырă ĕçлесе илчĕç. Вăрçăн çак татăклă тапхăрĕнче çĕршыва тырпул нумай кирлĕ. Тăшмана çĕнтерме те, нимĕç захватчикĕсем аркатнă хуçалăха хăвăртрах ура çине тăратма та тырă кирлĕ. Эпир государствăна çĕнтерӳ тума кирлĕ чухлех тырă пама пултаратпăр тата памалла та. Пирĕн колхозниксем харпăрхăй запасĕнчен государствăна чылай тырă пама пултараççĕ. Эпĕ хам 20 пăт пама йышăнтăм, çав тырра ыранах хатĕрлев пунктне леçсе паратăп. Çак тырра эпĕ тата пирĕн колхозниксем нумайĕшĕ хамăрăн юратнă Хĕрлĕ Çар фондне пама шутлатпăр.

«Ĕмĕт» колхоз председателĕ Скворцов юлташ Данилов юлташăн сăмахĕсене хапăл туса йышăнчĕ.

— Эпĕ хамăн запасран государствăна 20 пăт тырă паратăп, хам ертсе пыракан колхозри колхозниксем те çак пысăк та паха ĕçе активлăн хутшăнĕç, тесе шанса тăратăп. Кунсăр пуçне, эпир колхоз фондĕнчен те чылай тырă пама пултаратпăр. —терĕ Скворцов юлташ.

Канашлура пулнисем çак ыйтăва тĕплĕн сӳтсе яврĕç, колхозниксен харпăрхăй запасĕнчен государствăна тырă парас ĕçе анлăн сарса яма йышăнчĕç.

«Красный герой» колхоз примерне йышăнса, «Авангард» тата «Молот» ялхуçалăх артелĕсем Хĕрлĕ Çар фондне 250 пăт ытла тырă пама йышăннă.

Çулпуçăн историллĕ доклачĕ çине ответлесе

КӲКЕÇ, декабрĕн 26-мĕшĕ. (Телефонпа). Паян Толик-Хураçки ялсоветĕнчи «Малалла» ялхуçалăх артелĕнче колхозниксен пĕрлешӳллĕ пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура колхоз председателĕ Григорьева юлташ колхозăн хальхи пысăк задачисем çинчен каласа пачĕ. Вăл Сталин юлташăн Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 27 çул тултарни çинчен тунă доклачĕпе приказĕн пысăк пĕлтерĕшĕ çинчен колхозниксене тĕплĕн ăнлантарса пачĕ.

— Пирĕн республикăри малта пыракан чылай колхозсенче,—терĕ вăл, — çулпуç доклачĕ çине ответлесе, государствăна колхозниксен харпăрхăй запасĕнчен тырă парас ĕç сарăлса пырать. Эпир кăçал ырă тырпул туса илтĕмĕр. Çавăнпа та государствăна Хĕрлĕ Çар фончĕ валли обществăллă фондран кăна мар, харпăрхăй запасĕнчен те тырă парса пулăшма пирĕн пур майсем те пур. Эпĕ хам Хĕрлĕ Çар фондне 15 пăт тырă паратăп.

Фермăсен заведующийĕ Платонова юлташ, председатель каланине йышăнса, хăйĕн запасĕнчен 10 пăт тырă пама пулчĕ. Пĕрремĕш бригадăн бригадирĕ А. Иванова 10 пăт, 2-мĕш бригадăн бригадирĕ В. Иванова 7 пăт, аслă конюх Фатеева 5 пăт, колхозник Н. Степанов 5 пăт пама пулчĕç.

Пĕрлешӳллĕ пуху çапла йышăнчĕ: «Сталин юлташăн историллĕ доклачĕ çине ответлесе, Хĕрлĕ Çар фондне колхозниксен харпăрхăй запасĕнчен 150 пăт тата колхоз фондĕнчен 60 пăт тырă парас».

«Малалла» артель колхозникĕсем районри колхозниксемпе колхозницăсене хăйсен примерне йышăнма чĕнсе каларĕç.

— Фронта ытларах тырă парар, çапла майпа тăшмана татăклăнах çĕнтерес сехете çывхартар —тесе çырнă колхозниксем чĕнсе каланинче.

ЭСТОНИРЕ 37.000 ХРЕСЧЕН ХУÇАЛАХНЕ ÇĔР ВАЛЕÇСЕ ПАНА

37.000 хресчен хуçалăхне Эстонире çĕр валеçсе панă. Çĕр илнĕ хресченсене совет влаçĕ вăрлăх, ялхуçалăх инвентарĕ, ĕçлекен выльăх тата строительство материалĕсем парать. Выльăх-чĕрлĕх илме тата тĕрлĕ çуртйĕр тума çак çулхи тăваттăмĕш кварталта государство Эстонири хресченсене нумай сроклăха 11 миллион тенкĕ кивçен укçа панă. (ТАСС).

Совет Союзĕн Геройĕ Б. М. Васильев юлташ Шупашкарта

Чăваш халăхĕн фронтри паттăр ывăлĕсем тăшмана хирĕç хăйсен пурнăçне шеллемесĕр çапăçаççĕ. Вĕсем, Совет Союзĕнчи ытти халăхсен ывăлĕсемпе пĕрле, пирĕн Тăван çĕршывăн чысĕпе ирĕкĕшĕн пăхăнманлăхне хастарлăн хӳтĕлеççĕ. Чăваш халăхĕн 25 ывăлĕ Совет Союз Геройĕн ятне илме тивĕçлĕ пулчĕç. вĕсенчен пĕри—Борис Михайлович Васильев—фронтра мĕн вăрçă пуçланнăранпах çапăçать. Халĕ пирĕн паттăр землякăн кăкăрне «Ылтăн Çăлтăр» медалĕ, Ленин орденĕ тата Отечественнăй вăрçăн икĕ орденĕ çутатса тăраççĕ.

Ĕнер Б. М. Васильев Шупашкара килчĕ. Пирĕн мухтавлă земляк, Шупашкарта республикăн ертсе пыракан работникĕсемпе тĕл пулнă хыççăн, ĕнер хăйĕн çемьи патне Етĕрне районне тухса кайрĕ.

Етĕрне районĕнче пулнă хыççăн, Борис Михайлович Мăркаш районĕнче, хăйне валли самолет туянă колхозниксем патĕнче пулма ĕмĕтленет.

Çӳлти ӳкерчĕк çинче: Совет Союзĕн Геройĕ Борис Михайлович Васильев.

ЭСТОНИРЕ ПРОФСОЮЗСЕМ ĔÇЛЕМЕ ПУÇЛАНА

Ирĕке кăларнă Эстонире 16 тĕрлĕ профсоюз ĕçлеме пуçланă. Вĕсен шутĕнче чугун çул çинче ĕçлекенсен, коммунальниксен, суту-илӳре ĕçлекенсен, пищевиксен, химипе сланец промышленноçĕнче ĕçлекенсен союзĕсем шутланаççĕ. Хальхи вăхăтра фабрикăпа заводсенчи тата вырăнти комитетсен суйлавĕ пырать.

Профсоюз организацийĕсем культура тата йăла учрежденийĕсене хăвăртрах хута яма пулăшаççĕ. Эстони ССР-не ирĕке кăларнăранпа 50 рабочи клуб, 200 ытла хĕрлĕ кĕтессем тата профсоюзсен 40 библиотекине уçнă. Санаторисемпе кану çурчĕсене юсама пуçланă. (ТАСС).

Тырпул сутма чарасси çинчен

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă ОБЯЗАТЕЛЬНĂЙ ПОСТАНОВЛЕНИ

ССР Союзĕн Совнаркомĕ йышăннă постановленипе килĕшӳллĕн, Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăнать:

1. Колхозсене, колхозниксене тата пĕччен хуçалăхлă хресченсене, вĕсем государствăна тырă памалли плана тултариччен, тĕштырă, çăнăх тата пĕçерне çăкăр сутма е улăштарса илме чарас. Государствăна тырă памалли плана (кивçен илнĕ тырра каялла тавăрмалли, обязательнăй поставка тăрăх памалли, Хĕрлĕ Çарĕн тырă фондне памалли, МТС ĕçленĕшĕн натуроплата тӳлемелли плана), çавăн пекех тата колхозсенче вăрлăхпа фураж хывмалли плана пĕтĕм республика тултарнă хыççăн ССР Союзĕн Совнаркомĕ ирĕк панă тăрăх кăна колхозсем, колхозниксем тата пĕччен хуçалăхлă хресченсем тырă сутма пултармалла тăвас.

2. Колхоз председателĕсене тата ытти ĕçлĕ çынсене çак постановление пăснăшăн суд урлă ответ тыттармалла. Колхозниксемпе пĕччен хуçалăхлă хресченсене, тырăпа законсăр суту-илӳ туса айăпа кĕнисене, малтанхи хутĕнче 300 тенке çити штраф тӳлеттермелле, иккĕмĕш хутĕнче суд урлă ответ тыттармалла. Законсăр йĕркепе сутакан тырра туртса илмелле те Наркомзаг органĕсене памалла.

3. ССР Союзĕн Наркомзагĕн Чăваш АССР-ĕнчи уполномоченнăйне Федотов юлташа тата ĕçлыннии депутачĕсен райсовечĕсен исполкомĕсене çак постановление пурнăçа кĕртнине сăнаса пырассине йĕркелесе яма хушас.

Рынокĕсемпе пасарсене тĕрĕслесе тăрассине милици органĕсем çине хурас.

Чăваш АССР Совнаркомĕн Председателĕ А. МАТВЕЕВ.

Чăваш АССР Совнаркомĕн ĕçĕсен Управляющийĕ А. АМАЗОНОВ.

Совет Союзĕпе Франци Республики пĕр-пĕринпе союзлă пуласси тата пĕр-пĕрне пулăшасси çинчен тунă килĕшĕве СССР Верховный Совет Президиумĕ ратификациленĕ

1944-мĕш çулхи декабрĕн 25-мĕшĕнче СССР Верховный Совет Президиумĕ Совет Социализмлă Республикăсен Союзĕпе Франци Республики пĕр-пĕринпе союзлă пуласси тата пĕр-пĕрне пулăшасси çинчен тунă килĕшĕве. Мускавра 1944-мĕш çулхи декабрĕн 10-мĕшĕнче алă пуснă скерне, ратификациленĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ДЕКАБРĔН 25-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Декабрĕн 25-мĕшĕнче пирĕн çарсем ЧЕХОСЛОВАКИРЕ, ШАХЫ хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата хĕвеланăçнерехре, тăшманпа çапăçса МЕРОВЦЕ, ГОКОВЦЕ, СУДОВЦЕ, ПЕЧЕНИЦЕ, ДОЛЬНЫЙ ПРАНДОРФ, БАТОВЦЕ, СЕТИХ ялĕсене туртса илнĕ.

ВЕНГРИРЕ, БУДАПЕШТ хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тата хĕвеланăçнерехре, пирĕн çарсем çаплах ăнăçлăн наступлени туса пынă, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан 40 пункта ытла тытса илнĕ, вăл шутра—ЭРД, НАДЬТЕТЕНЬ, ДИОШД, ТЕРЕКБАЛИНТ, БУДАКЕСИ, ПАТЬ, ИЗНЕ, ПИЛИШЧАБА, ЛЕАНИВАР, ЧОЛНОК, ДАГ, УНИ, СОМОР, ЖАМБЕК, МАНЬ, ЧАБДИ, ЗАМОЛЬ, МОХА ялĕсем тата ЭРД, ТИННИЕ, ЛЕАНИВАР, МОХА чугун çул станцийĕсем. Çапла, пирĕн çарсем БУДАПЕШТ хулинчен хĕвеланăçнелле каякан пур чугун çулсене те татнă.

Малтанхи даннăйсем тăрăх, декабрĕн 21-мĕшĕпе 24-мĕшĕ хушшинче наступлени туса пынă вăхăтра УКРАИНАРИ 3-мĕш фронт çарĕсем БУДАПЕШТ хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тăшмана çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен çакăн пек сухатусем тӳстерне: ПЕТЕРСЕ ТАКНА: самолетсем—106, танксемпе хăй тĕллĕн çӳрекен тупăсем—291, тĕрлĕ калибрлă тупăсем—147, минометсем—724. Çапăçу хирĕнче тăшман салтакĕсемпе офицерĕсен 12.000 вилли ытла выртса юлнă.

Çав вăхăт хушшинчех пирĕн çарсем çакăн пек трофейсем ТЫТСА ИЛНĔ: самолетсем—154, вĕсенчен чылайĕшне юсамалла, танксемпе хăй тĕллĕн çӳрекен тупăсем—21, тĕрлĕ калибрлă тупăсем—101, минометсем—127, пулеметсем—168. Нимĕçсемпе венгерсен 5.468 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çӳренĕ тата тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Декабрĕн 24-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 110 танкне çĕмĕрсе тăкнă, вăл шутран 61 танкне БУДАПЕШТ хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 37 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Чехословакире Шахы хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан темиçе пункта, вăл шутра çулсен узелĕ пулса тăракан Батовце ялне, туртса илнĕ. Пĕр участокра тăшман пехотин полкĕ тата 40 танк пирĕн позицисене атакăланă. Хаяр çапăçу хыççăн нимĕçсене каялла хăваласа янă. Çапăçу хирĕнче гитлеровецсен темиçе çĕр вилли выртса юлнă тата нимĕçсен персе çĕмĕрнĕ 16 танкĕ тăрса юлнă. Тепĕр участокра Варлашин майорăн стрелковăй батальонĕ çĕрле тăшмантан сиксе пырса иртсе кайнă та тăшман оборонин узелне хыçалтан атакăланă. Кĕске тытăçу хыççăн пирĕн подразделенисем лайăх позицисем тытса илнĕ. Тăшман, çав позицисене каялла туртса илме хăтланса, çапăçу пыракан вырăна 15 грузовикпа автоматчиксем янă. Пирĕн боецсем нимĕçсен грузовикĕсене çывăхах янă та пулеметсемпе пеме пуçланă. Гитлеровецсем, машинăсем çинчен сиксе анса, ăçта килчĕ унта тарма тытăннă. Вĕсенчен нумайĕшне вĕлерне, 80 автоматчикне тыткăна илнĕ. Малалла куçса пырса, Варлашин майорăн батальонĕ пĕр кĕпер тытса илнĕ те шыв урлă каçса кайнă. Кун каçиччен çав батальон боецĕсем нимĕçсенчен 2 танк, 4 тупă, 20 пулемет, 3.000 мина тата ытти трофейсем те тытса илнĕ.

Кун каçиччен тĕрлĕ участоксенче нимĕçсемпе венгерсен 500 салтакĕпе офицерне çити тыткăна илнĕ.

* * *

Венгрире, Будапешт хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тата хĕвеланăçнерехре, пирĕн çарсем çаплах ăнăçлă наступлени туса пынă. Бичке хулине туртса илнĕ хыççăн совет сен стрелковăй тата танковăй чаçĕсем тăшмана çурçĕр еннелле пырса çапнă. Çав тери хăвăрт малалла куçса пырса, пирĕн çарсем Тинние тата Леанивар чугун çул станцийĕсене туртса илнĕ. Çапла вара, Будапештран хĕвеланăçнелле каякан юлашки чугун çула татнă. Тăшман, хăйĕн танкĕсемпе, хăй тĕллĕн çӳрекен туппиcемпе тата мотопехотипе хаяр контратакăсем туса, совет чаçĕсене чугун çул çинчен каялла хăваласа яма хăтланнă. Анчах та гитлеровецсен контратакисем пĕри те ăнăçлă пулман. Çапăçса малалла куçса пырса, совет çарĕсем Естергом хулинчен 10 километр кăнтăртарахра ларакан Чолнок ялне туртса илнĕ. Пирĕн хĕвелтухăçнелле наступлени туса пыракан ытти чаçĕсем Будакеси поселокне вĕркĕнсе кĕрсе кайнă та ăна йышăннă. Ку поселок Будапешт хулинчен 3 километрта ларать. Пирĕн çарсем пыра-пыра çапнипе каялла чакакан тăшман çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен пысăк çухатусем тӳсет. Туллимар даннăйсем тăрăх, кун каçиччен 2.000 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă.

Совет авиацийĕ тăшман çарĕсене бомбăсем пăрахса штурмланă. Пирĕн летчиксем нимĕçсен 20 танкне çити тата 300 автомашинипе лавне ытла пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата аэродромсенче нимĕçсен 28 самолетне пĕтерсе тăкнă.

Будапешт хулинчен хĕвеланăçнерехри тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехри çапăçусенче совет воинĕсем çав тери пысăк хастарлăхпа паттăрлăх кăтартаççĕ. Гварди кĕçĕн лейтенанчĕн Кисличенкăн взвочĕ алă вĕççĕн хаяррăн тытăçса илсе, 40 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă, 30 нимĕçе тыткăна илнĕ. Соломко, Соболь, Лысый тата Мартынов рядовойсем тăшман траншейисене вĕркĕнсе кĕрсе кайнă та 13 гитлеровеца вĕлернĕ, 15 нимĕçе тыткăна илнĕ. Бронебойщиксем гварди кĕçĕн сержанчĕ Скоморохов тата гварди рядовойĕ Петрин, тăшман контратакине сирсе янă чухне, нимĕçсен 4 танкне çунтарса янă. Тупă командирĕ Комовин старшина тăшманăн икĕ танкне çĕмĕрсе тăкнă. Макаренко пулеметчик, çав тери тĕл персе, гитлеровецсен пĕр ушкăнне вĕлерсе пĕтернĕ. Патронсем пĕтсе çитсен, хăюллă боец, гранатăсем вăркăнтарса, нимĕçсен тата вунă салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Смирнов старши лейтенант кун каçиччен нимĕçсен 2 самолетне персе ӳкернĕ. Скоморохов летчик икĕ кун хушшинче тăшманăн 4 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Хĕвелтухăç Пруссире пирĕн разведка отрячĕсемпе снайперсем нимĕçсен 120 салтакĕпе офицерне вĕлерсе пĕтернĕ. Щукин снайпер кун каçиччен 3 нимĕçе вĕлернĕ. Логунов старши сержант, танксене пемелли пăшалпа персе, тăшманăн боеприпас турттарса пыракан автомашинине вут хыптарса янă. Нимĕçсен грузовикĕ сывлăшa сирпĕнсе кайнă. Пулеметчиксем Пимуков сержантпа Влохин рядовой, вут тивертекен пульăсемпе персе, тăшман складне вут хыптарнă. Складра тăнă нимĕçсем хӳтлĕхе тарма пуçланă. Пирĕн пулеметчиксем пеме пуçланă та гитлеровецсене вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Остроленка хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тăшман отрячĕ пирĕн оборона ăшне кĕме хăтланнă. Советсен малти подразделенийĕсем, пулеметсемпе персе, нимĕçсен пĕр ушкăнне пĕтерсе тăкнă. Чĕррĕн юлнă нимĕçсем ним тĕлли-паллисĕр каялла чакнă. Пирĕн летчиксем Модлин чугун çул станцийĕнче нимĕçсен складне сирпĕнтерсе янă. Насельск станцийĕнче, тупăсемпе, пулеметсемпе персе, тăшманăн чугун çул çинчи горючи цистернисене вут тивертсе янă. Совет Союзĕн Геройĕ гварди старши лейтенанчĕ Кулагин летчик сывлăшри çапăçура нимĕçсен разведкăра çӳрекен самолетне персе ӳкернĕ. Çакă вăл Кулагин юлташăн сывлăшри 28-мĕш çĕнтерĕвĕ пулса тăрать.

* * *

Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флочĕн карапĕсем Балтика тинĕсĕнче нимĕçсен 8.000 тонна таякан суднине шыва путарнă.

Икĕ МТС-ăн ăмăртăвĕ

Вăрнар МТС-ĕ 1944 çулта Горький облаçĕнчи Каменка МТС-ĕпе ăмăртса ĕçлерĕ. Нумаях пулмасть, çак МТС-сем социализмлă ăмăртăвăн договорĕ мĕнле пурнăçа кĕнине тĕрĕслесе ирттернĕ.

Тĕрĕслевĕн итогĕсене пăхса тухса, Каменка МТС-ĕ мала тухнине тата Вăрнар МТС-ĕ йывăртарах условисенче те лайăх ĕçленине палăртнă.

Каменка МТС-ĕн представителĕсем Вăрнар МТС-ĕн ĕçне тĕрĕсленĕ хыççăн çакна палăртнă:

Вăрнар МТС-ĕ тракторсемпе ĕçлемелли çулталăк планне 130,5 процент тултарнă. Кашни 15 лаша вăйлĕ тракторпа 480 гектар сухаланă, ĕçĕн хăйне ларакан хакне 20 процент чакарнă. МТС-ри 11 трактор бригадинчен 9 бригада çулталăк планне тултарнă, 86 трактористран 69-шĕ хăйсен сезонри нормисене тултарнă. Икĕ трактор бригади хăйсен çулталăк планĕсене 200-шер процент, пĕр бригада 195 процент тултарнă. МТС-ри 18 тракторист хăйсен тракторĕсемпе ĕçлемелли çулталăк планне 200-шер процент, 21 тракторист нормăна 150 процентран пуçласа 200 процента çити тултарнă.

МТС пулăшнипе пула, районри колхозсем ялхуçалăх ĕçĕсене агротехникăллă лайăх срокĕсенче туса ирттернĕ. Çапла вара чылай колхозсем пысăк тухăçлă тырпул туса илнĕ. Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан колхоз кашни гектартан вăтам шутпа 22,3 центнер тĕштырă туса илнĕ. «Победа», «1-ое Мая» тата ытти колхозсем те кашни гектартан вăтам шутпа çĕршер пăт ытла тырă пухса илнĕ. МТС ĕçленĕ колхозсем обязательство тăрăх сентябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне тырă парса татнă, Хĕрлĕ Çар фондне планран ирттерсе 30 пин пăт тырă панă.

Каменка МТС-ĕн бригади, çÿлте асăннă çитĕнÿсемпе пĕрлех, Вăрнар МТС-ĕн çак çитменлĕхĕсене те палăртнă: трактор бригадисенче шалти йĕркелĕх правилисем çук, учетпа отчетность трактор бригадисенче те, çавăн пекех МТС-ра та ытла та кая юлса пырать. Тунă ĕçсем çинчен çыракан актсене ытла та кая юлса, уйăхра пĕрре е икĕ хутчен кăна йĕркелеççĕ. Трактористсен, бригадирсен, çавăн пекех учетчиксен те ĕç кĕнеки çук.

Вăрнар машинно-тракторнăй станцийĕн бригади Каменка МТС-ĕ мĕнле ĕçленине тĕрĕсленĕ. Вăл бригада çакна палăртнă:

Каменка МТС-ĕ тракторсемпе ĕçлемелли çулталăк планне 207 процент тултарнă, кашни 15 лаша вăйлĕ тракторпа план тăрăх 329 гектар сухалас вырăнне 679 гектар сухаланă. Амăрту договорĕ тăрăх Каменка МТС-ĕ горючие 5 процент перекетлеме пăхнă, чăннипе вара 1 процент перекетленĕ.

МТС ĕçлекен колхозсем план тăрăх кашни гектартан вăтам шутпа 12,9 центнер тырă илме пăхнă, тĕрĕсленĕ хыççăн 13,9 центнер илни палăрнă.

Каменка МТС-ĕ 1944 çулта паха пуçару тунă. Вăл металломран «ХТЗ» маркăллă 4 трактор тунă. Вăл тракторсемпе уйăхир ĕçĕнче ăнăçлăн усă курнă.

Каменка МТС-ĕн ĕçĕнче çакăн пек çитменлĕхсем пуррине палăртнă: СССР Çĕрĕ; Халăх Комиссарĕн А. А. Андреев юлташăн «Тракторсемпе ялхуçалăх машинисене кĕркунне тата хĕлле сыхласа усрассине организацилесси çинчен» калакан приказне кунта пурнăçламан. Колхозсене хăварнă машинăсене сыхлас тĕлĕшпе колхозсемпе договор туман.

Вăрнар тата Горький облаçĕнчи Каменка МТС-ĕсен представителĕсем, 1944 çулхи социализмлă ăмăртăвăн итогĕсене тунă хыççăн, 1945 çулта та пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеме йышăннă тата çакăн пек обязательствăсем илнĕ:

КАМЕНКА МТС-ĕ:

1. Кашни 15 лаша вăйлĕ тракторпа сезонра, çемçе суха çине куçарса шутласан, 550 гектар сухаламалла.
2. 5 процент горючи перекетлемелле.
3. Тракторпа тунă ĕçсен хăйне ларакан хакне 20 процент чакармалла.
4. МТС ĕçлекен колхозсенче тырă тухăçлăхне планпа пăхнинчен 5 процент ытларах ÿстермелле.
5. 1945 çулхи февралĕн 1-мĕшĕ тĕлне МТС-ри мĕнпур тракторсене юсаса пĕтермелле.

ВĂРНАР МТС-ĕ:

1. Кашни 15 лаша вăйлĕ тракторпа сезонра 440 гектар сухаламалла.
2. 5 процент горючи перекетлемелле.
3. Тракторсемпе тунă ĕçĕн хăйне ларакан хакне 10 процент чакармалла.
4. МТС ĕçлекен колхозсен тырă тухăçлăхне планпа пăхнинчен 6 процент ытларах ÿстермелле.
5. 1945 çулхи мартăн 1-мĕшĕ тĕлне МТС-ри мĕнпур тракторсене юсаса пĕтермелле.

РЕСПУБЛИКА ТĂРĂХ

ФЕРМА ЗАВЕДУЮЩИЙĔСЕН КУРСĔ

СОВЕТСКОЕ. Райçĕрĕç пайĕ çак хĕл вăхăтĕнче ферма заведующийĕсен курсĕ уçлă 81 çын вĕрентсе кăларма палăртнă. Халĕ курс ĕçлеме пуçларĕ. Пĕрремĕш черетре 41 çын вĕренет.

ГЕКТАРТАН 161 ПĂТ ТУЛĂ ТУСА ИЛНĔ ЗВЕНО

ЕЛЧĔК. Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра 7 çынтан вăйлă тырпул туса илекен звено тунă. Ăна Анна Емельянова ертсе пырать. Çак звенона колхоз 5 гектар çĕр уйăрса панă. Çав участок çинче вĕсем пурĕ 708 пăт, кашни гектартан 161 пăт тулă туса илнĕ.

Звено çитес çул кăçалхинчен те вăйлăрах тырпул туса илессишĕн кĕрешет.

ÇĔНĔ ПÿРТ ЛАРТСА ПАНĂ

СĔНТĔРВĂРРИ. Кĕтĕкварти «Çĕнĕ ял» колхозри çамрăк колхозницăн Е. Петрова юлташăн кăçал май уйăхĕнче килçурчĕ пĕтĕмĕшпех çунса кайнă. Унăн амăшĕ вилнĕ. Аннĕ Хĕрлĕ Çарта, икĕ йăмăкĕпе пĕр шăллĕ пĕчĕккĕ, аслашшĕ ватă; çавăнпа çĕнĕ пÿрт лартма вĕсене йывăр пулнă. Е. Петрова колхозницăна колхоз çĕнĕрен лайăх пÿрт лартса панă.

ШКУЛТИ ОБОРОНА КРУЖОКĔСЕМ

КАЛИНИНО. Хăмăшри çичĕ çул вĕренмелли шкулта вăрçă ĕçне вĕренессине лайăх организациленĕ. Вăрçă ĕçне вĕренессине куллен туса пырас майпа, эпир шкулта оборона кружокĕсемпе Осоавиахим организацийĕ турăмăр. Унта пурĕ 54 вĕренекен кĕçĕç. Халĕ Осоавиахим членĕсем йĕлтĕрпе лайăх çÿреме вĕренеççĕ, колхоз çамрăкĕсен йĕлтĕрлĕ ăмăртăвне хатĕрленеççĕ.

П. ИЛЛАРИОНОВ.

ЙĔЛТĔРÇĔСЕН ПОХОЧĔ

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Уйпуçĕнчи çичĕ çул вĕренмелли шкулта вĕренекенсем йĕлтĕрлĕ ăмăртăва хатĕрленме тытăнчĕç. Çав майпа шкулта йĕлтĕрçĕсен взвочĕсене тунă. Взводсем 20—30 сехетлĕ программăпа вĕренеççĕ, тренировкăсем туса ирттереççĕ.

Çак кунсенче вĕренекенсем йĕлтĕрпе 5 километрлă поход туса ирттерчĕç.

П. ТИХОНОВ.

ВЦСПС Президиумĕнче

Коллективлă тата уйрăм пахчасем çинчен

ВЦСПС Президиумĕ хăйĕн юлашки ларăвĕнче рабочисемпе служащисене коллективлă тата уйрăм пахчасенче пахча-çимĕç лартса ÿстерме пулăшакан комитетăн докладне сÿтсе-явнă. ВЦСПС-ăн рабочи снабжени отделĕн заведующийĕ Петелин юлташ хăйĕн докладĕнче кăçал 16 миллион ĕçсыннин пахча пулни çинчен каласа панă. Ку ĕнтĕ, 1943 çулхипе танлаштарсан, 4 миллион пахча ытларах пулать. Пахчасен лаптăкĕ 77 процента яхăн ÿснĕ, вăл 1.357.000 гектар шутланнă. Коллективлă тата уйрăм пахчасенче кăçал, пĕлтĕрхипе танлаштарсан, çĕрулмипе пахча-çимĕç пĕр хут çурă ытларах туса илнĕ.

Коллективлă тата уйрăм пахчасенче пахча-çимĕç туса илесси,—тет докладчик.—пĕтĕм халăх ĕçĕ пулса тăчĕ. Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче рабочисемпе служащисем хăйсен пахчисенче çĕрулмипе ытти пахча-çимĕçсем пĕр миллиард пăта яхăн туса илнĕ.

Ларура çавăн пекех автомобиль промышленноçĕнчи рабочисен профсоюзĕн Центральный Комитечĕн председателĕ Борисов юлташ, чугун çул çинчи рабочисен профсоюзĕн Центральный Комитечĕн председателĕ Карягин юлташ тата ВЦСПС секретарĕ Тарасов юлташ сăмахсем тухса каланă. Агротехника ĕçне лайăхлатасси пирки Т. Д. Лысенко академик сăмах тухса каланă.

ВЦСПС Президиумĕ 1945 çулта коллективлă тата уйрăм пахчасен хисепĕпе лаптăкне ÿстерессси çинчен решени йышăннă. Профсоюз организацийĕсене Украинăра, Белоруссире, Молдавире, Литва, Латви, Эстони ССР-ĕсенче тата нимĕçсен фашистла захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă ытти районсенче те коллективлă тата уйрăм пахчасен хисепĕпе лаптăкне нумай ÿстерме хушса хăварнă. Фабзавкомсемпе месткомсене тата пахча комиссийĕсене çар çыннисен çемьисемпе Отечественнăй вăрçăн инвалидĕсене чи лайăх тата чи çывăх участоксене уйăрса памалла.

Коллективлă тата уйрăм пахчасенче пахча-çимĕç туса илес ĕçре лайăх тĕслĕхсем кăтартнăшăн ВЦСПС-ăн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне автомобиль промышленноçĕнчи рабочисен профсоюзĕн Центральный Комитетне, центрти чугун çулсен рабочисен профсоюзĕн Центральный Комитетне, Молотов ячĕпе тăракан автозаводăн, Киров ячĕпе тăракан заводăн тата Кузбасри Сталин ячĕпе тăракан шахтăн завкомĕсемпе пахча-çимĕç комиссийĕсене памалла тунă. Профсоюзсен 10 Центральный Комитетне ВЦСПС-ăн грамотисене панă. (ТАСС).

А. С. ПОПОВ РАДИО ШУХĂШЛАСА КĂЛАРНĂРАНПА 50 ÇУЛ ТУЛТАРАС УМĔН

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ А. С. Попов радио шухăшласа кăларнăранпа 50 çул тултарнине паллă туса ирттерме Комитет тунă. Çав Комитета çаксем кĕнĕ: Б. А. Веденский (комитет председателĕ), А. И. Берг, А. И. Бертинов, С. И. Вавилов, А. М. Васильев, Л. М. Галлер, А. Ф. Иоффе, И. Г. Кабанов, П. Л. Капица, С. В. Кафтанов, И. Г. Кляцкин, В. Л. Комаров, В. И. Коваленков, А. Л. Минц, В. Ф. Миткевич, Н. Д. Папалекси, И. Т. Пересыпкин, А. А. Пузин, К. Я. Сергейчук, Ф. Г. Суворов, А. А. Турчанин, В. А. Фок, А. Д. Фортушенко тата М. А. Шателен.

Çав Комитета А. С. Попова ĕмĕрлĕхе асăнмалла тăвас шутпа тумалли ĕçсене палăртса хума, лекцисемпе докладсем организацилеме, çавăн пекех тата А. С. Попов радио шухăшласа кăларни 50 çул тултарнă ятпа 1945 çулхи май уйăхĕнче Мускав хулинче научнăй конференци туса ирттерме хушнă.

Г. УРБАНОВИЧ ТАТА В. БЕЛЯКОВ— ГИМНАСТИКА ТĔЛĔШПЕ СССР-ăн АБСОЛЮТНĂЙ ЧЕМПИОНĔСЕМ

Тăватă кун хушшинче Мускавра паллă гимнастсен Пĕтĕм Союзри турнирĕ пулнă. Амăрту условийĕсем питех те йывăр пулнă. Пирвайхи хут ĕнтĕ ăмăрту программи йывăрлăх енчен пĕтĕм тĕнчери ăмăрту программисенчен кая пулман.

Совет Союзĕн 1943 çулхи абсолютнăй чемпионки Мускав çынни Галина Урбанович ку хутĕнче те хăйĕн пысăк мастерлăхне кăтартнă, вăл илме май пулнă 120 балран 110 балл илнĕ. Иккĕмĕш вырăна Ленинград çынни Тышко тухнă, вăл 99,8 балл илнĕ.

Арçынсем хушшинче чи лайăх результат параканĕ Мускаври динамовец Владимир Беляков пулнă. Совет Союзĕн 1943 çулхи абсолютнăй чемпионĕ Николай Серый, ăмăртусенче темиçе хут та малти вырăна тухнăскер, 00,5 балл каярах илсе иккĕмĕш вырăна юлнă.

Турнирта мĕн пурĕ 32 гимнаст пулнă. Вĕсенчен вуниккĕшĕ ăмăрту программин тĕрлĕ пайĕсем тăрăх çĕршыв чемпионĕ ячĕсене илнĕ. (ТАСС).

ФИНСЕМ ТУРТТАРСА КАЙНĂ ХАКЛĂ ЯПАЛАСЕНЕ КАРЕЛ-ФИНН РЕСПУБЛИКИНЕ КАЯЛЛА ТАВĂРАÇÇĔ

ПЕТРОЗАВОДСК, декабрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Финляндирен Карел-Финн республикине государство университечĕ валли литература тата физикăпа хими приборĕсем тата хăма çуракан заводсем валли оборудовани килсе çитнĕ, мĕн пурĕ 8 вагон япала килнĕ. Оккупаци вăхăтĕнче финсем турттарса кайнă промышленность оборудованийĕпе культурăллă хаклă япаласем пĕрмаях килсе тăраççĕ. Паянхи куна 180 вагон килнĕ те ĕнтĕ.

ПЕТРОЗАВОДСК, декабрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Петрозаводска Финляндирен Сергей Миронович Киров памятникне тата Карел-Финн республикин столицинчи пионерсен дворецне, садсемпе скверсене илемлетсе тăнă скульптурăсене, оккупаци вăхăтĕнче финсем илсе кайнăскерсене, каялла илсе килнĕ.

Франципе Совет Союзĕ хушшинчи килĕшĕве ратификацилени

ПАРИЖ, декабрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Декабрĕн 22-мĕшĕнче пулса иртнĕ ларура Франци Правительстви Франципе Совет Союзĕн хушшинчи килĕшĕве ратификациленĕ.

ВЕНГЕРСЕН ШВЕЦИРИ ПОСЛАННИКЕ КАЛАНИ

СТОКГОЛЬМ, декабрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Швеци радиовĕ пĕлтернĕ тăрăх, венгерсен Стокгольм хулинчи посланникĕ Уллейн-Ревицки çапла каланă: эпĕ хам та тата манăн политикăллă пур сотрудниксем те вăй çитнĕ таран Венгри халăхĕн халĕ тунă Вăхăтлăх Правительствине пулăшса тăма пулатпăр, тенĕ.

ПОЛЬШĂН ИРĔКЕ КĂЛАРНĂ РАЙОНĔСЕНЧИ ХРЕСЧЕНСЕН СЪЕЗЧĔСЕМ

ЛЮБЛИН, декабрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). «Глос Люду» хаçат Польшăн ирĕке кăларнă районĕсенчи воеводствăсенче пулса иртнĕ хресченсен съезчĕсем çинчен тĕплĕн çырса пĕлтернĕ.

Съездсенче пĕр-пĕрне пулăшакан хресчен союзĕсем тăвасси çинчен, çавăн пекех тата Польша Халăхĕн Ирĕклĕх Комитетĕнчен Халăхăн Вăхăтлăх Правительствине туса хурасси çинчен резолюци йышăннă.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, декабрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

Моншаупа Ставло секторĕсенче лăпкă тесе калама пулать, анчах та пĕр-пĕрин çине артиллерирен вăйлăн персе тăраççĕ. Вăл секторсенче тăшман малалла куçма пултарайман. Ставлоран çурçĕртерехре тата çурçĕр-хĕвеланăçнерехре нимĕçсем темиçе çĕрте парашютистсен пысăк мар ушкăнĕсене антарнă. Вăл ушкăнсене халь пĕтерсе пыраççĕ. Оттон хулипе Маршран çурçĕр-хĕвелтухăç енчелле тăшман вăйлă атакăланине союзниксем ăнăçлăн чарса пыраççĕ. Маршпа Рошфор хулисем хушшинче тăшманăн малти отрячĕсем—танксемпе мотопехота—хĕвеланăçнелле куçнă.

Бостоньрен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тăшман вăйлă тапăнса пырать. Нимĕç танкĕсем хуларан 7 мильăра тăраççĕ. Унта халĕ те çапăçу пырать. Союзниксен чăçĕсем Бигонвиль таврашĕнче Мертеланжерен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре 3 мильăна çити куçнă.

Дикирхран хĕвеланăçнерехри тата çурçĕр-хĕвеланăçнерехри районра союзниксен çарĕсем Гейдершейда тăшмантан тасатнă. Тадлер çывăхĕнче тăшман, пехотăпа танксем ярса, контратака пуçланă, унта йывăр çапăçусем пуçланса кайнă. Союзниксен чăçĕсем Дикирхран хĕвеланăçнерехре темиçе миля малалла кайнă.

Çапăçусем Конодорф таврашĕнче пыраççĕ.

Страсбург хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре тăшманăн Рейн урлă каçнă патруль чăçĕсене каялла хăваласа янă. Кольмартан çурçĕртерехре тăшман контратака тунă хыççăн союзниксен малти чăçĕсем Сигольсхейм патĕнче каялла чакнă. Декабрĕн 24-мĕшĕнче союзниксен авиацийĕ аплă операцисем туса ирттернĕ.

ЛОНДОН, декабрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕн пĕлтерĕвĕнче каланă тăрăх, Италире союзниксен çарĕсен патрулĕсем кăна çапăçнă.

Югославири çапăçусем

БЕЛГРАД, декабрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн верховнăй штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă: Хĕвелтухăç Боснире, пуринчен те ытларах Биелина хули районĕнче, çаплах хаяр çапăçусем пыраççĕ. Нимĕçсем, хăйсен чăçĕсене каялла чакма кирлĕ çулсене туртса илес шутпа, Брчко хули енчелле пĕрмаях тапăнаççĕ. Биелина—Челич—Брчко çулĕ çинче тăшманăн вăйлă çирĕплетнĕ Корай ятлă опорнăй пунктне пĕтерсе тăкнă.

Вардиште хули секторĕнче Югослави чăçĕсем тăшманăн каялла чакакан темиçе ушкăнне çĕмĕрсе тăкнă та Кремна патне пырса тухнă.

Санджакра, Приеполье—Бродарево районĕнче, нимĕçсем Плевле хули патнелле татса тухма хăтланнă, анчах та вĕсен ĕçĕ пăчланса ларнă.

Черногорире Матешева—Майковац секторĕнче нимĕçсене чылай пунктсенчен хăваласа кăларнă. Югослави чăçĕсем тăшмана флангсенчен вăйлăн пыра-пыра çапаççĕ.

Грецири лару-тăру

ЛОНДОН, декабрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радион Афины хулинчи корреспонденчĕ çапла пĕлтернĕ: паян Афины хулинче нимĕнле лăпкăлăх та çук. Акгли çарĕсем ЭЛАС партизанĕсене Пирей порчĕпе Афины хулин пĕр пайĕнчен хăваласа кăларнă. Греции çурçĕр-хĕвеланăç пайĕнче ЭДЕС (Греци хальхи правительстви майлă çар организацийĕ) чăçĕсем хăйсен штабĕ тăнă вырăнтан тинĕс хĕрринелле чакса пынă. ЭДЕС чăçĕсене унтан ЭЛАС («Халăхăн ирĕклĕх фрончĕн» çар организацийĕ) чăçĕсем вăйлă атака туса сирпĕтсе кăларнă.

СКОБИ ГЕНЕРАЛА ЭЛАС ПАНĂ ОТВЕТ

ЛОНДОН, декабрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Афины хулинчи корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: ЭЛАС («Халăхăн ирĕклĕх фрончĕн» çар организацийĕ) руководстви паян ирхине Скоби генерал патне çырнă çырăва пичетлесе кăларнă. Çав çырура вăл грексен «ту бригадине» тата грексен нумаях пулмасть Египетран илсе килнĕ ытти чăçĕсене Афины хулинчен кăларса кайма ыйтнă. Вăл çарсене Сирос утравĕ çине е Киклад утравĕсенчен пĕрин çине илсе каймалла. Ответра тата нимĕç оккупацийĕ вăхăтĕнче Греци пуканелле правительствин пуçлăхĕ пулнă Раллисăн охраннăй батальонĕсенчи офицерсемпе салтаксене пурне те хĕçпăшалсăрлатса арестлеме ыйтнă. ЭЛАС ответĕнче çак ыйтусене пурне те пурнăçлама кирлĕ çинчен асăрхаттарнă.

Афины хулипе Пирей районĕнче хăй майлă кĕрешекенсене ЭЛАС хĕçпăшалсăрлатма килĕшет. Кун пирки çапла каланă: «Афины хулипе Пирейри ЭЛАС майлисем пĕтĕмĕшле килĕшÿ тунă хыççăн хăйсемех хирĕç тăма пăрахĕç, вĕсем ЭЛАС чăçĕсене Афины хулипе Пирейрен илсе тухнă вăхăтра хирĕç тăма чарăнĕç. Эпир ЭЛАС майлисене хĕçпăшалсăрлатма килĕшетпĕр. Паллах ĕнтĕ, çакă вăл пире хирĕç кĕрешекен лагерь майлисене пирĕнпе пĕр вăхăтрах хĕçпăшалсăрлатмаллине пĕлтерет. Пирĕн шутпа, хĕçпăшалсăрлатас ĕçе Греци правительстви туса ирттерни пĕртен пĕр тĕрĕс май пулса тăрать. Вăл правительствăна пĕрлешÿллĕ конференцире туса хумалла. Кирек епле пулсан та, Греци гражданĕсене Греци правительстви кăна хĕçпăшалсăрлатма пултарать». Малалла ответра çапла каланă: «Греци халăхĕ хăйĕн çĕршывĕнче хăй хуçа пулса тăрать, çавăнпа та вăл правительство ирĕклĕ тата никама пăхăнман государствăн правительстви пулмалла. Çав правительство вара, халăх кăмăлне туса, демократиллĕ ирĕксемпе усă курма май туса памалла. Тăшманпа килĕштерсе ĕçленĕ çынсене пурне те хăвăртрах государство аппаратĕнчен тасатса кăлармалла. Хăй çĕршывне тивĕçлĕ пулман çынсене законлă йĕркепе айăплămалла. Халăхăн яланхи çарне туса хумалла. Хăй ирĕкĕпе пухăннă çар вăйĕсене, вăл шутрах «ту бригадине» тата «священнăй батальон» текенскере, салатса ямалла.

Çĕршывра хăвăртрах ирĕклĕ суйлав туса ирттермелле. Суйлав вăхăтĕнче Греци халăхĕ тытăм йĕркин мĕнле формине тата мĕнле правительствăна кăмăллашине каласа пама пултарать. Çаксене пурне те Греци правительстви тумалла».

США КОНГРЕСĔН ЛАРĂВĔ ХУПĂННĂ

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). (Вăхăтра çитермен). Енер каçхине, государство департаментĕнче çĕнĕ çынсене вырăна лартнине çирĕплетнĕ хыççăн, конгресс ларăвĕ хупăнни çинчен пĕлтернĕ.

Ноябрĕн 7-мĕшĕнче суйланă çĕнĕ конгресс январĕн 3-мĕшĕнче пухăнмалла. Кутаранччен представительсен палатинче демократсем 212, республиканецсем те çавăн чухлех пулнă. Кунсăр пуçне, представительсен палатин членĕсен шутĕнче вилнисем тата депутат полномочине пăрахнисем пулнă. Представительсен çĕнĕ палатинче 243 демократ, 190 республиканец, пĕр прогрессист тата Америкăри рабочи партирен 1 çын пулать. Çĕнĕ сенатра 57 демократ, 38 республиканец тата пĕр прогрессист (Лафоллет) пулать.

Юлашки суйлавсенче конгресс составĕнчен тухса ÿкнĕ çынсен шутĕнче Рузвельтăн тулашри политикине хирĕç нумай çулсем хушши кĕрешсе пынă изоляционистсем чылай. Вĕсен шутĕнче çаксем пур: Сенатор-республиканецсем — Най, Данахер, Дэвис, сенатор-демократсем—Кларк, Рейнольдс; представительсен палатин членĕсем: республиканецсем,—Фиш, Дэй, Маас, Ламбертсон, демократсем — Дайс, Старнес. Çĕнĕрен суйланă икĕ сенатор — республиканецсем — Салтонстолл (Массачузетс штатĕнчен) тата Морзе (Орегон штатĕнчен)—Рузвельтăн тулашри политики майлă пулĕç тесе шутлаççĕ. Представительсен палатине çĕнĕ членсем суйланине пула Рузвельт майлисен блокĕ çирĕпленнĕ. Çĕнĕрен суйланисем хушшинче Пауэлл (Нью-Йорк), Деласей (Вашингтон штачĕ) тата Паттерсон (Калифорни) пур.

Конгресра изоляционистсен вăйĕ чакнă пулин те, сенатра изоляционистсен блокĕ чылай вăйлă-ха.

Лаша—колхозăн ылттăн фончĕ

Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче совет хресченĕсем фронта тырпулпа апатçимĕç кăна мар, лашасем те нумай пачĕç. Ялхуçалăхĕнче те лашапа тумалли ĕçсем, вăрçăчченхипе танлаштарсан, чылай нумайланчĕç. Çавăнпа та лашана пăхасси тата унпа усă курасси çав тери ответлă ĕç пулса тăчĕ. Ку тĕлĕшпе ВКП(б) Центральный Комитечĕпе СССР Совнаркомĕ «Колхозсемпе совхозсенче лашасен хисепне ÿстерессси тата вĕсене пăхса усрасси çинчен» йышăннă постановлени пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çак постановлене пĕр пăркаланмасăр пурнăçласа пыракан колхозсенче лаша шучĕ çулран-çулах ÿссе пырать. Ун пек колхозсене республикăра нумай илсе кăтартма пулать. Лашасене пăхса усрас тата тихасене пăхса çитĕнтерес енĕпе Сĕнтĕрвăрри, Октябрьски, Çĕрпÿ, Сĕнтĕр, Муркаш районĕсенчи нумай колхозсем лайăх ĕçлерĕç.

Анчах та уйрăм районсенче лашасем ĕрчетес тата вĕсене пăхса усрас ĕç çине кирлĕ пек пăхманнине пула, лашасен шучĕ нумай чакрĕ. Шăмăршă районĕнче 1944 çулта кăна лашасен хисепĕ 743 пуç чухлĕ чакнă. Чкаловски, Куславкино, Пăрачкав, Шупашкар тата ытти хăшпĕр районсенче те сахалланнă. Лашасен шутне ÿстерес, лашасене сыхласа усрас тесен, лашасене пăхас ĕçри обезличкăна пĕтермелле, конюхсен тата лашапа çÿрекенсен ответлăхне ÿстермелле. Кунпа пĕрлех чуптару кампанине лайăх ирттерни, пĕтĕ кĕсресене йĕркеллĕ пăхса усрани тата тихасене лайăх çитĕнтерни кирлĕ. Кăçал пирĕн колхозсенчи кĕсресенчен 77,3 процентне чуптарса хăварнă. Çак кĕсресене усракан колхозсем тата вĕсене пăхакан конюхсем пысăк ответлăха туйса ĕçлемелле. Лашасен шутне ÿстерессси, урăхла каласан, государство планне тултарасси вĕсенчен килет. Колхозсенчи кашни пĕтĕ кĕсререн тиха илсе çитĕнтерĕ конюхсене нумай илсе кăтартма пулать. Анчах та пĕтĕ кĕсресене сыхласа усрас тĕлĕшпе нумай колхозсенче çителĕксĕр ĕçлеççĕ-ха. Етĕрне районĕнче кăçал 42 кĕсре, Канаш районĕнче 51 кĕсре хăм пăрахнă. Ку тĕлĕшпе Елчĕк районĕ те начар тĕслĕхсем кăтартать. Кунта та 26 кĕсре хăм пăрахнă. Çак районри «Малалла» колхозра 9 кĕсре хăм пăрахнă. Кунта пĕтĕ кĕсресемпе çÿреме çамрăк ачасене хушнă, йывăр турттарнă. Вăл лашасене колхозниксем çумне çирĕплетмен. Хĕрлĕ Чутай районĕнчи «Маяк» колхозăн председателĕ Филимонов, кĕсре пĕттипе пĕлсе тăнă çĕртех, ăна ашăм аштарма панă. Унта ăна кунĕпех хытă хăваланă. Кĕсре çав кунах хăм пăрахнă. Кĕсрене хăм пăрахтарни—пысăк айăп. Кĕсре хăм пăрахнă хыççăн кашнинчех айăплине кăтартса акт çырмалла, ун çинчен правлени ларăвĕнче сÿтсе-явмалла, лару йышăнăвне çирĕплетме райсовет исполкомне тăратмалла, айăплисене çийĕнчех суд урлă ответ тыттармалла. Пăрачкав районĕнче 18 кĕсре хăм пăрахнă, анчах та айăплисене 6 çынна кăна ответ тыттарнă.

Пĕтĕ кĕсресене пăхас ĕçре çирĕп йĕрке пулмалла, вĕсене халех охраннăй свидетельствăсем памалла, шанчăклă колхозник çумне çирĕплетмелле. Пĕтĕ кĕсресене лайăх апат çитермелле. Кăвакарнă е çĕршĕннĕ улăм е утă çитерме юрамасть. Çĕрулмине пĕçерсе çитермелле. Унсăр пуçне витаминлă апатсем тата талăка 20—30 грамм тăвар парсан аван. Сĕткенлĕ апат (çĕрулми, выльăх кăшманĕ) çук çĕрте тырă шăтарса çитерсен усăллă. Пĕтĕ кĕсресемпе 6 уйăхран 9 уйăха çитиччен çăмăл ĕçре усă курмалла, юлашки 2 уйăхра тата хăмлана хыççăн 15 кун хушши пур ĕçрен те хăтармалла. Çав вăхăтрах вĕсене кашни кунах 3—4 сехетрен кая мар уçăлтарса çÿремелле. Халĕ лашасен шутне тихасем çитĕнтернипе кăна ÿстерме пулать. Çавăнпа та пĕтĕ кĕсресене тата тихасене куç шăрçине сыхланă пек сыхласа усрамалла.

Лашасене пăхасси, вĕсемпе тĕрĕс усă курасси—хальхи вăхăтра колхозсен умĕнче тăракан чи пысăк та ответлă задача. Лашасемпе чунсăррăн усă курнине хирĕç çине тăрса кĕрешмелле. Анчах та, калас пулать, лаша çине чунсăррăн пăхнине нумай тĕл пулма пулать-ха. Комсомольски районри Ленин ячĕпе тăракан колхозра А. Морозов колхозник лашана туяпа хĕнесе унăн ÿтне шăйăрса пĕтернĕ. Чкаловски районри Чапаев ячĕпе тăракан колхозра «Пчела» ятлă лаша йывăр чирленĕ хыççăн нумайччен никам пăхмасăрах ирĕкре çÿренĕ. Вăйсăрскер, пĕр шăтăка кайса ÿкнĕ те, унта пĕр талăка яхăн выртнă. Апла пулсан та, ăна конюхсем мар, утар хуралçи тупнă. Куславкино районĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхозра «Молодчик» ятлă аратлă айăра йывăр турттарса вĕлернĕ. Вăрмар районĕнчи «Маяк» колхозăн председателĕ Архипов юлташ «Урбан» ятлă аратлă айăра район центрне кÿлсе кайнă та, унта ăна çухатнă. Çаксем вĕсем лаша çине чунсăррăн пăхнине кăтартаççĕ. Лаша çине çакăн пек пăхакансене суда парса айăпламалла. Аратлă айăрсене кÿлсе çула кайма пурне те, вăл шутра колхоз председательне те, чармалла.

Халĕ лашасене уйăхран-уйăха тĕрĕслесе тăракан комиссисем кашни районрах тунă. Çак ĕçе кирлĕ пек йĕркелени лашасене пăхас тата вĕсемпе усă курас ĕçре улшăну тумалла, обезличкăна пĕтĕмпех пĕтермелле. Лашасене тĕрĕслеме ятарласа тунă яланлăх комиссисем уйрăм районсенче лайăх ĕçлеме тытăннă. Çĕрпÿ районĕнче виçĕ комисси тунă. Комисси председателĕсем пулса ВКП(б) райкомĕн секретарĕсем Митьковпа Свешников тата райсовет исполкомĕн председателĕ Хабаров юлташсем ĕçлеççĕ. Виçĕ комисси те кашни уйăхрах 22-мĕш числара ĕçлеççĕ. Районри мĕнпур колхозсенчен виçĕ пункта ездовойсем хăйсен лашисене кÿлсе пыраççĕ. Кашни ездовой аллинче вĕсем лашапа çÿреме пултарнине кăтартакан удостоверени пур. Удостоверенин пĕр енче государственнăй комисси пăхнине паллă тумалли графасем. Çак районри комиссисем икĕ хутчен лашасене тĕрĕсленĕ, çав тĕрĕслÿсен итогĕсене илсе пăхсан, районра лашасене пăхас ĕç лайăхланса пыни курăнать. Малтанхи хут пăхнă чухне лашасен пĕтĕм шутĕнчен лайăххисем 26 процент, вăтаммисем 50 процент, вăтамран каярахисем 12 процент, ырханнисем 2 процент, суранлисем 5 процент пулнă. Иккĕмĕш хут пăхнă чухне çакăн пек улшăнусем пулнă: лайăххисем 29 процент, вăтаммисем 61 процент, вăтамран каярахисем 9 процент, ырханнисем 1 процент, суранлисем 3 процент кăна юлнă. Кÿлсе пынă çунасем, хăмăтсемпе ĕнерчĕксем тата тилхепесем чылай лайăхланни палăрнă.

Калас пулать, уйрăм районсенче лашасене пăхса тухассине çак вăхăта çитсе те кирлĕ пек йĕркелемен-ха. Акă, Тăвай районнех илер. Кунта икĕ комисси тунă. Вăл комиссисем декабрĕн малтанхи кунĕсенче виçĕ кун хушши ĕçленĕ. 5 колхоз лашасене кăтартма илсе пыман. Комисси пурĕ те 27 колхоз лашисене кăна пăхнă. Лашасене илсе пынă çынсен нумайĕшĕн лашана вĕсен çумне çирĕплетнине кăтартакан хутсем пулман. Ку ĕнтĕ комисси хăйĕн ĕçне тивĕçлĕ пек организацилеменнине çирĕплетсе парать.

Çапла вара ездовойсем мĕнле ĕçленине, вĕсем лашашăн тăрăшнине е тăрăшманнине тĕрĕслÿре уççăнах курма пулать. Государство комиссийĕсем лашасене пăхнă чухне çирĕп йĕрке тумалла. Лашасене пăхма ятарласа пĕр кун уйăрмалла, ăçта, хăш колхозра пăхассине малтанах кăтартса хумалла. Ездовойсем государство комиссине лаша кăтартма пынă чух яланах кÿлсе çÿрекен инвентарьпе, ут таврашĕсемпе пымалла. Государство комиссийĕ лашана кăна мар, кÿлнĕ хатĕрсемпе ут таврашĕсене те тĕрĕслемелле. Лашасене йĕркесĕр усракан колхозсем çинчен комисси ларăвĕнче, кирлĕ пулсан, райсовет исполкомĕн ларăвĕнче те сÿтсе-явмалла. Ерекен чирлĕ лашасене уйрăм вырăна илсе пымалла.

Государство комиссийĕсем яланах лайăх ĕçлесен, лашасене пăхас тата вĕсемпе усă курас ĕç нумай лайăхланма пултарать.

Çураки валли кашни колхозрах лашасене çитерме кирлĕ таран апат уйăрса, старши конюх аллине памалла. Лашасем валли апат уйăрнă чухне хăшпĕр зоотехниксем, колхоз председателĕсем тата ытти работниксем утă, улăм тата тĕштырă кăна уйăраççĕ. Ку тĕрĕс мар. Лаша валли сĕтеклĕ апатсем: çĕрулми, выльăх кăшманĕ, силос та уйăрмалла. Ырхан лашана çĕрулми пĕçерсе çитерни сĕлĕрен те усăллăрах. Анчах та çĕрулми пиçнĕ шыва выльăхсене памалла мар. Выльăх кăшманне е чĕкĕнтĕре чĕрĕлле çитерес пулать. Анчах лашана çĕрулми чĕрĕлле пани вара пачах сиенлĕ. Лашасене силос парас пулсан, чи лайăххине памалла. Çаксене конюхсем пĕр пăркаланмасăр пурнăçласа пырсан çеç лашасем вăйлă та мăнтăр пулма пултараççĕ.

Зоотехниксен, ветеринарсен, кашни колхозрах лашасене пăхмалли тата çитермелли йĕрке туса, конюхсене тĕплĕн ăнлантармалла. Кайран вара çав йĕркене пурнăçланине тĕрĕслесех тăмалла.

Уйрăм колхозсенче лашасене вăрман турттарнă çĕрте çĕмĕрсе пĕтереççĕ. Кăçал вăрман турттарнă çĕрте лашасемпе мĕнле усă курмалли çинчен ятарласа çырнă правило пур. Вăрман ĕçлекенсем çав правилăсене пăхăнса ĕçлемелле.

— Лаша — колхозăн ылттăн фончĕ, — теççĕ Çĕрпÿ районĕнчи колхозниксем. Ку тĕрĕсех. Çакна кашни колхозник, колхозница асра тытмалла. Колхоз руководителĕсен лашасене пăхас, вĕсемпе усă курас ĕçре çирĕп йĕрке туса хумалла. ВКП(б) райкомĕсемпе райисполкомсен колхозсенче лашасене мĕнле пăхнине, лаша ĕрчетмелли плана тултарассишĕн мĕнле кĕрешнине яланах контроллесе тăмалла.

И. ТРОИЦКИЙ.
Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕн заместителĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительне секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 04287 Типография № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. ф. 6. 59×42 п. л. Тираж 16.000 экз.